Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор:** **Воробьева Раиса Васильевна**

**Книга:** **Асамлӑ вӑрманта = В волшебном лесу**

## Стихотворение: Пӗлӳ кунӗ

Капӑр тумтир тӑхӑнса,
Аллӑма чечек тытса
Савӑнӑҫлӑ кулӑпа
Утрӑм эпӗ шкулалла.

Ян! янрарӗ шӑнкӑрав,
Урока чӗнет йыхрав.
Ретӗн-ретӗн йӗркипе
Тӑрса тухрӗҫ пӗр йӗрпе.

Шав шавларӗҫ урамра.
Кам кӑна ҫук уявра –
Хӑнасем, учительсем,
Ырӑ ҫул сунакансем…

Хӗрача манн алӑран
Тыттарчӗ пӗлӳ уҫҫи.
Ӑсталанӑ юманран –
Чӑвашсен ыр йывӑҫҫи.

Уҫрӑм шкулӑн алӑкне –
Лекрӗм унӑн ытамне.
Умӑмра – пӗлӳ тӗнчи.
Эпӗ халӗ – шкул ачи.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.